27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ИЮНЬ
23
ЭРНЕКУН
123(6618) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Союзĕн Отечественнăй вăрçин виçĕ çулталăкĕ

(Вăрçă тата политика тĕлĕшĕнчи итогсем)

Фашистла нимĕç вăрă-хурахĕсен банди Совет Союзĕ çине ирсĕррĕн те ултавлăн тапăннăранпа паян виçĕ çул тултарчĕ. Совет халăхĕ виçĕ çул ĕнтĕ сĕмсĕр захватчиксене хирĕç Отечественнăй аслă вăрçă туса пырать. Пирĕн çĕршыври халăхсем хăйсен Тăван çĕршывне сыхлама вăрçăн малтанхи кунĕсенчех пĕр çын пек пулса çĕкленчĕç. Хĕрлĕ Çар, виçĕ пин километр тăсăлса выртакан фронтри йывăр та юнлă çапăçусенче нумай миллионлă, çĕнĕ техникăпа хĕçпăшалланнă фашистла нимĕç çарне чарса тăрса, ăна çынсемпе хĕçпăшалсем тĕлĕшĕнчен çав тери пысăк çухатусем тӳстерчĕ. Европăри вунă çĕршыври хуласемпе ялсем тăрăх вутпа та хĕçпе тухнă фашистсен çар машини пирĕн çара хирĕç çапăçнă çĕрте осечка пачĕ.

Вăрçăн малтанхи çулĕнчех Хĕрлĕ Çар, нимĕçсене Мускав патĕнче хаяррăн пырса çапса, тăшманăн суйласа илнĕ чи вăйлă çарĕсене çĕмĕрсе тăкрĕ. Юлашки çулталăк çурă хушшинче, фашистла нимĕç захватчикĕсене Сталинград патĕнче аркатса тăкнăранпа, тăшман вăй илме пултараймарĕ. Совет çарĕсем, мĕнпур фронтсенче наступлени пуçласа ярса, нимĕçсен Сталинград, Орел, Смоленск, Ленинград патĕнчи, Миус, Днепр шывĕсем çинчи, Перекоп, Севастополь патĕнчи, Карели перешеекĕнчи, Свирь шывĕ çинчи вăйлăн çирĕплетнĕ оборона системине çĕмĕрсе тăкрĕç, пысăк шывсем — Дон, Çурçĕр Донец, Десна, Волхов, Днепр, Кăнтăр Буг, Днестр, Прут, Серет, Нарва, Свирь шывĕсем урлă каçрĕç, çапла вара çапăçусенче тĕрĕсленнĕ тата пиçĕхнĕ çарсем тивĕçлипе çапăçма тытăнсан, нимĕнле валсемпе крепоçсем те чăтса тăма пултарайманнине кăтартса пачĕç. (Гитлеровецсем çав валсемпе крепоçсем çинчен питĕ нумай сӳпĕлтетрĕç).

Верховный Главнокомандованин тĕрĕс стратегине пула, совет генералĕсемпе офицерĕсен тĕплĕн шутласа тунă çирĕп тактикине пула, пирĕн воинсем паттăррăн тата çар ĕçне пĕлсе çапăçнине пула, юлашкинчен, хăйĕн хăватлă çар техники пуррине пула, Хĕрлĕ Çар нимĕçсен, итальянецсен, румынсен, венгерсен, финсен суйласа илнĕ пĕрлешӳллĕ çарĕсене чылай пысăк поражениссем тӳстерчĕ. Пирĕн çарсем Мускав, Сталинград патĕнче, Кавказра, Орелпа Смоленск, Ленинград патĕнче тата Донбасра, Днепр çинче, Крымра, Днепрăн сылтăм енчи Украинăра, Днестр çинче тата Карели перешеекĕнче тунă аслă çĕнтерӳсем ĕмĕрлĕхех историе кĕрсе юлаççĕ.

Совет çарĕсем, хăйсем наступлени туса пынă вăхăтра, тăшман оккупациленĕ территорие пĕр миллион çурă тăваткал километра яхăн ирĕке кăларчĕç, хĕвеланăçнелле 2.000 километра çити кайрĕç, фронтăн пысăк тăрăхĕнче хамăрăн чикĕсем патне тухрĕç тата Румыни территорине кĕрсе кайрĕç. Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем миллионшар совет çыннисене фашистсен пусмăрĕнчен хăтарчĕç. Пирĕн çарсем нимĕçсене хăйсем оккупациленĕ облаçсенчи промышленность чĕрлавăрĕсен тата апат-çимĕç продукчĕсен пуянлăхĕсемсĕр тăратса хăварчĕç, гитлеровецсем нумай вăхăт ĕмĕтленнĕ хĕвелтухăçĕнчи «пурăнма кирлĕ çĕр талккишĕ» нумай миллион нимĕç салтакĕсен çăви, фашистла çар техникин пысăк масарĕ пулса тăчĕ.

Фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешес ĕçре Хĕрлĕ Çара мухтавлă совет партизанĕсем пысăк пулăшу пачĕç. Вĕсем вăрçă пынă виçĕ çулталăк хушшинче тăшманăн тылĕсемпе штабĕсене нумай аркатрĕç, унăн çулйĕрĕсемпе сыхăнăвне çĕмĕрсе тăчĕç, фашистла нимĕç çынçиенĕсене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе пычĕç. Совет партизанĕсем нумай пин совет çыннине вилĕмрен тата фашистла пусмăра хăваласа каясран хăтарчĕç.

«—«—

Вăрçăн виçĕ çулталăкĕ хушшинче фашистла нимĕç захватчикĕсен Совет Союзĕпе Германи фронтĕнчи çапăçусенче, вилнисемпе тыткăна лекнисене шутласан, 7 миллион та 800 пин салтакĕпе офицерĕ пĕтнĕ, тăшман 70 пин танк, 60 пин самолет, 90 пин ытла орудие çухатнă.

Çав вăхăт хушшинче пирĕн çарсен, вилнисемпе тыткăна лекнисене, пĕр хыпарсăр çухалнисене шутласан, 5.300 пин çын пĕтнĕ, 49 пин танк, 30.128 самолет тата 48 пин орудие пĕтнĕ.

Хĕрлĕ Çара çĕнтерӳсем тума пирĕн союзниксем — Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Великобритани чылай пулăшрĕç. Вĕсем пире стратеги тĕлĕшпе питĕ пахa чĕртаварсемпе хĕçпăшал парса тăчĕç, Германин çар объекчĕсем çине тăтăшах бомбăсем пăрахса, Германин çар хăватне хавшатса пычĕç.

Çапла, Хĕрлĕ Çар Отечественнăй вăрçăн пĕррремĕш тапхăрĕнче гитлеровецсен çиçĕмле вăрçă планĕсене пĕтерсе тăкса, ун хыççăнхи тапхăрта вара тăшманăн оборона стратегине, вăл хăй тытса илнĕ совет территорийĕ çинче çирĕпленсе ларма шутланине аркатса тăкрĕ. Фашистла нимĕç çарне вăйлăн çапнă, халĕ ĕнтĕ вăл хăйне тĕпĕ-йĕрĕпех аркатса тăкасси умĕнче тăрать.

Отечественнăй вăрçăн виçĕ çул хушшинчи вăрçă тĕлĕшĕнчи итогĕсем çакăн пек ĕнтĕ.

Гитлерла империалистсем, Совет Союзне хирĕç вăрçă пуçарнă чухне, Хĕрлĕ Çарăн вăрçăри малтанхи ăнăçсăрлăхĕсемех пирĕн çĕршыври халăхсен массисем хăйсен влаçне шанса тăрассине хавшатĕç тесе, ССР Союзĕнчи халăхсем, хушшинче хирĕçӳсем кăларĕç тесе, рабочисемпе хресченсем тата интеллигенци хушшинчи союза хавшатĕç тесе шутланă. Пурнăçра пачах та урăхла пулчĕ: вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсем совет тылĕнчи ĕççыннисене пĕтĕçтерчĕç кăна, вĕсене хăйсен халăх влаçĕпе, совет влаçĕпе таччăнрах сыхăнтарчĕç. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче Совет Союзĕнчи халăхсем хушшинчи туслăх хурçă пек пиçĕхсе çирĕпленчĕ. Совет обществинчи халăхсен пурнăçри интересĕсем çине таянса тăракан рабочисемпе хресченсен тата интеллигенцин сыхăнăвĕ татах та ытларах тĕреклĕнчĕ.

Нимĕç ирсĕрĕсем çавăн пекех тата совет промышленноçĕ ку чухнехи вăрçă хатĕрĕсене массăллăн кăларас тĕлĕшпе тăракан йывăр задачăсене пурнăçа кĕртме пултараймĕ тесе, пирĕн транспорт вăрçă хатĕрĕсене турттарас ĕçе пурнăçа кĕртме пултараймĕ тесе, ялхуçалăхĕ вара çарпа халăха апат-çимĕç, промышленноçа чĕртаварсем çителĕклĕ тăратма пултараймĕ тесе шутланă. Вăрçăн виçĕ çулталăкĕ хушшинче Совет Союзĕн экономики мар, гитлерла Германин экономики юхăнса кайрĕ. Нимĕçсем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра тӳснĕ çухатусем тата союзниксен авиацийĕ пыра-пыра çапни Германин экономикăпа вăрçă тĕлĕшĕнчи хăватне хавшатрĕç. Çав вăхăтрах совет çĕршывĕн промышленноçĕ, транспорчĕ тата ялхуçалăхĕ вăрçă вăхăтĕнчи тĕрĕслĕве ăнăçлăн тӳссе ирттерчĕ. Совет халăхĕ хамăрăн Тăван çĕршыва хӳтĕлессишĕн хăйĕн вăй-хăватне шеллемест, вăл хăй тунă Совет государствине тăшманран хăкăрпа тăрса хӳтĕлеме хатĕр тăнипе хавхаланнă. Отечественнăй вăрçă халăхсен халиччен нихăçан пулман патриотла хавхаланăвне, халăх массисен Хĕрлĕ Çара пулăшнă çĕре каякан иксĕлми творчествăллă вăй-хăватне çĕклерĕ. Халĕ, вăрçăн тăваттăмĕш çулталăкне кĕнĕ чухне, Совет Союзĕн хăватлă вăрçă хуçалăхĕ пур, вăл Хĕрлĕ Çара хĕçпăшалсем, боеприпассем, апат-çимĕç, снаряжени ытлăн-çитлĕн парса тăрать.

Совет рабочийĕсем, колхозникĕсем, интеллигенци, Совет Союзĕн халăх хуçалăхне фронт ыйтăвĕсене тивĕçтерес майпа йĕркелесе, Хĕрлĕ Çара çĕнтерӳ тума мĕн кирлине пурне те парса тăраççĕ. Тăшман танксемпе самолетсем тĕлĕшĕнчен вăйлăрах пулни кая тăрса юлчĕ ĕнтĕ, Совет Союз экономикин вăйĕ кунран кунах ӳссе пырать.

Çапла, тăшман совет стройĕ çирĕп мар пулассине шанса тăнине совет халăхĕ пĕтĕмпех ӳпĕнтерсе хучĕ. Халăхсен тăванла туслăхĕ çинче никĕсленсе тăракан совет государстви вăрçă пынă вăхăтра ытларах çирĕпленсе тĕреклĕнчĕ, халăхсене пусмăрласси çинче никĕсленсе тăракан фашистла государство вăрçă тĕрĕслевне тӳсеймерĕ, халĕ вăл пĕтсе ларасси умĕнче тăрать.

Вăрçăн виçĕ çулталăк хушшинчи политикăллă итогĕсем çакăн пек ĕнтĕ.

Виç çул каярах гитлеровецсем хăйсене Европăна пăхăнтаракансем тесе шутланă. Германи, хĕвелтухăç Европăри çĕршывсене пусмăра кĕртсе ӳкерсе, вăрă-хурахла союза Италие, Румынине, Финляндие, Венгрие, Болгарие явăçтарчĕ. Вăл нейтральнăй государствăсене хăйĕн агенчĕсене ярса тăрса тата çав агентсене мулăпса тăрса, асăннă государствăсене вăйлăн хĕстерсе пычĕ, вĕсем енчен хăй валли чылай пысăк усă илчĕ. Гитлерла Германи пĕтĕм тĕнчери халăхсен пурнăçне тата хăрушсăрлăхне хыпса çăтма хăтланчĕ. Ирĕклĕхе юратакан халăхсем ун чухне Гитлера хирĕçле лагере тин кăна пĕрлешме тытăннă пулнă. Тĕрĕссипе, гитлерла Германи тата унпа пĕр каварлисен пĕтĕм вăйĕсем хĕссе килнине пирĕн çĕршыв пĕччен тӳссе ирттерчĕ.

Халĕ ĕçсем тĕпренех улшăнчĕç. Халĕ ĕнтĕ, виçĕ çул каярахри пек, наступлени тата çитĕнӳсем тăвакани гитлерла Германи мар, пачах урăхла, союзлă государствăсен хĕçпăшаллă вăйĕсем ĕнтĕ фашистла нимĕç захватчикĕсене пур çĕрте те пыра-пыра çапаççĕ, хĕсеççĕ. Союзлă государствăсем çарсемпе хĕçпăшалсен хисепĕ тата пахалăхĕ тĕлĕшĕнчен тăшманран вăйлăрах пулса тăраççĕ. Союзлă государствăсен туслăхĕ халĕ нихăçанхинчен те çирĕпрех. Гитлерла Германин хĕçпăшаллă вăйĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкма союзлă государствăсен пĕр-пĕринпе килĕшсе тунă плансем пур. Британипе Америка çарĕсене çурçĕр Франциe антарас ĕçе чаплăн пурнăçа кĕртни, союзниксен çарĕсем Италире ăнăçлăн наступлени туса пыни çакна пĕлтерет: паянтан пуçласа Германин Хĕрлĕ Çара хирĕç те, пирĕн союзниксен — Англипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çарĕсене хирĕç те Европа территорийĕ çинче вăрçмалла пулать.

Халĕ, Хĕрлĕ Çарпа пирĕн союзниксен çарĕсен пĕрлĕхлĕ вăйĕсене нимĕçсем пусмăра кĕртсе ӳкерне çĕршывсене тӳрремĕнех ирĕке кăларассишĕн кĕрешнĕ çĕре янă чухне, пĕрлешнĕ халăхсен çарĕсем хăйсен тимĕр аллипе гитлерла Германие тата унăн Европăри вассалĕсене карланкăран ярса тытнă чухне, Гитлерăн банди хăй пурнĕрех тата пĕтĕмпех пĕтсе ларассине нимĕнле мерăсемпе те сирсе яма пултараймасть. Халĕ ĕнтĕ пуриншĕн те çакă паллă: пĕтĕм тĕнчене парăнтарма шутланă гитлеровецсем хăйсен вăйĕ çитеймн задачăна пурнăçа кĕртме пикеннĕ пулнă. Гитлеровецсен шайккин ĕçĕсем Крылов халапĕнчи шăпа кунçулне аса илтереççĕ: çак шăпа мăнтăрланса вăкăрпа танлашма шут тытнă пулнă, мекĕрлене-мекĕрлене карăнма пуçланă та ытлашши мекĕрленнипе шаплаттса çурăлнă.

Фашистсен вăрă-хурахла блокĕ арканса пырать. Фашистла Германи вăрçăра йывăр поражениссем тӳснипе пула вилĕм шăтăкĕ умне пырса тăчĕ. Германин союзникĕ пулнă Итали халĕ нимĕçсен империалисчĕсене хирĕç кĕрешет. Финляндири ертсе пыракан преступниксен ушкăнĕ, Гитлера юрас тесе, Совет Союзĕн ырă-кăмăллă мирлĕ сĕнĕвĕсене йышăнмарĕ, çапла вара, тĕрĕссипе илсен, Финляндие вăрçăра пĕтесси патне илсе çитерчĕ. Гитлерăн ытти вассалĕсем — Румыни, Венгри, Болгари те пĕтес шăпа умĕнче тăраççĕ. Европăри фашистла Германипе пĕр каварлă пулса тăракан çĕршывсен Германипе сыхăну тытассине пĕтерме тата хăйсен çĕршывĕсене юхăнтарассинчен, вăрçă вутĕнчен хăтарса хăварма вăхăт та, мĕнпур кирлĕ условисем те çителĕклĕ пулнă. Анчах та гитлеровецсемпе пĕр каварлисем Гитлерăн вăрă-хурахла шайккипе питех те таччăн сыхăннă, вĕсем хăйсен халăхĕсен кунçулĕшĕн тăрăшмаççĕ. Гитлерăн Финляндири, Румынири, Венгрири, Болгарири тарçисем, фашистла Германие юрас тесе, хăйсен çĕршывĕсенчи халăхсен интересĕсемшĕн синлĕ ĕçсем тăвассине малтарах хураççĕ. Гитлерăн тарçисем ĕçе хăйсен çĕршывне нимĕç çарĕсем оккупацилесси патне илсе çитерчĕç. Çапăçусене Германи территорийĕ çине куçарассине вăрăма чăсма тăрăшса, гитлеровецсем Финляндирен, Венгрирен, Румынирен, Болгарирен Германие хӳтĕлемелли вырăнсем туса хучĕç. Çапах та, правительсем гитлеровецсене сутăпнă çĕршывсенчи халăхсен халĕ, союзлă государствăсен хĕçпăшаллă вăйĕсем пулăшнипе, нимĕç оккупанчĕсене тата вĕсен хӳрешкисене хăйсен çĕршывĕсенчен хăваласа кăларма майĕсем пур. Гитлер вассалĕсем пулса тăракан çĕршывсенчи халăхсем çавăн пек майпа кăна хăйсем валли ирĕклĕх прави çĕнсе илме пултараççĕ.

Гитлеровецсем Европăра хуçаланни фашистсем халăхсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне пĕтерекенсем пулса тăнине усăмлăн кăтартса пачĕ. Çав вăхăтрах пĕрлешнĕ халăхсен çарĕсем Европăна, халăхсене гитлерла тиранирен ирĕке кăларакансем пулса, пыраççĕ, вĕсем фашистсем пусмăрланă çĕршывсен çĕрĕсем çине халăхсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне ура çине тăратма кĕреççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ нимĕçсем пусмăрланă халăхсем халĕ те пĕрлешнĕ халăхсен хĕçпăшаллă вăйĕсене ытларах та ытларах пулăшу парса тăраççĕ. Малашне çав пулăшу ӳссех пырĕ.

Çапла, вăрçă пынă вăхăтра гитлерла захватчиксен-империалистсен пĕтĕм тулашри политикин ĕмĕчĕсемпе планĕсем путланса ларчĕç. Гитлеровецсен вăрă-хурахла блокĕ панкрута тухрĕ, ирĕклĕхе юратакан халăхсен союзĕ вара никам çĕнтерейми вăй пулса тăчĕ, халĕ унăн фашистла агрессорсен Европăри вăрă-хурахла йăвине çĕмĕрсе тăкма, халăхсем хĕнхурпа чуралăх тӳснишĕн айăплисене ответ тыттарма, ют çĕршывсене туртса илес ĕмĕтпе çĕнĕрен вăрçă тухассине пĕтерсе лартма пур майсем те пур.

Вăрçăн виçĕ çулталăк хушшинчи тулашри политика тĕлĕшĕнчи итогĕсем çакăн пек ĕнтĕ.

Вăрçăн виçĕ çул хушшинчи вăрçă тата политика тĕлĕшĕнчи итогĕсем гитлерла Германи ĕнтĕ вăрçăра парăнасси çинчен, ăна пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкас сехет çывхарса килни çинчен усăмлăн калаçа параççĕ. ССР Союзĕпе Великобританин тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çарĕсем, пур енчен те штурмласа, хăйсем валли фашистла Германин пурнăç центрĕсем патне çул уçаççĕ, çав вăйсем çĕнтерни çинчен пĕлтерес вăхăт инçе мар ĕнтĕ. Халĕ вăрçă вĕçленсе пырать. Анчах та пĕтĕмпех çĕнтерессипатне пымалли çулăн юлашки пайĕ çăмăл пулмасть. Вăрçă чи хаяр, татăклă та йывăр тапхăра кĕчĕ. Аманса хаярланнă фашистла тискер кайăк урсах хирĕç тăрĕ. Фронт Германин пурнăç центрĕсем патне çывхарса пынă май гитлеровецсем татах та ытларах хирĕç тăрĕç. Тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпех аркатса тăкас тесен, тата темиçе хут чен хăватлăн пыра-пыра çапни кирлĕ.

Паллах, çав задачăсене пĕтĕм союзлă çĕршывсен çарĕсем пĕрлешсе татăклăн çапăçсан кăна, гитлерла Германипе унăн вассалĕсене хирĕç активлăн çапăçма пĕрлешӳллĕ халăхсен аллинчи хĕçпăшаллă тĕп вăйсене вăхăтра явăстарсан кăна пурнăçа кĕртме пулать.

Иккĕленмелли çук, союзлă государствăсем, хăйсем умне тĕнчене фашистла вăрă-хурахсенчен çăлса хăварас тĕллев лартнăскерсем, хăйсен пĕтĕм вăйне çав аслă тĕллеве пурнăçа кĕртнĕ çĕре парĕç.

СОВИНФОРМБЮРО

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

СТАЛИН юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Эпир, Чăваш АССР-ĕн Муркаш районĕнчи Атапай ялсоветĕнчи Свердлов ячĕпе тăракан колхозăн колхозникĕсем, нимĕç ирсĕрĕсене Тăван çĕршывран хăвăртрах хăваласа кăларма хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара мĕн вăй çитнĕ таран пулăшас тесе, хамăрăн перекетлесе хăварнă укçаран 50.000 тенкĕ боевой техника тумалли фонда хыврăмăр. Колхоз председателĕ Т. В. Налимов юлташ 20.000 тенкĕ, комсомолăн пуçламĕш организацийĕн секретарĕ К. Е. Ковалева юлташ — 5.000 тенкĕ, вылăх-чĕрлĕх пăхакансен бригадирĕ Е. Ф. Садовникова юлташ — 5.000 тенкĕ пачĕç.

Колхозниксем хушнипе —

Колхоз председателĕ НАЛИМОВ.

Комсомолăн пуçламĕш организацийĕн секретарĕ КОВАЛЕВА.

Чăваш АССР-ĕ, Муркаш районĕ, Атапай ялсовечĕ, Свердлов ячĕпе тăракан колхоз

Колхоз председательне Налимов юлташа
Комсомол организацийĕн секретарьне Ковалева юлташа

Свердлов ячĕпе тăракан колхозăн колхозникĕсемпе колхозницисене, боевой техника тума 50.000 тенкĕ пухнăскерсене, манран тăванла салам калăр тата Хĕрлĕ Çар тав туни çинчен пĕлтерĕр.

И. СТАЛИН.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ,

СТАЛИН юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Чăваш АССР-ĕнчи Муркаш районĕнчи «Крестьянин» колхозăн колхозникĕсемпе колхозницисем, Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, нимĕç çынçиенĕсене хăвăртрах аркатса тăкас ĕмĕтпе çунса, хăйсен перекетлесе хăварнă укçи-тенкинчен 50.000 тенкĕ пуçтарчĕç те Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерӳ фондне хыврĕç. Эпĕ колхоз председателĕ Михаил Иванович Вязов, 10.000 тенкĕ патăм, колхоз счетоводчĕ Иван Кириллович Вязов — 5.000 тенкĕ, 70 çулхи колхозник Иван Тимофеевич Мудров — 3.000 тенкĕ, фронтовик арăмĕ, колхозница Антонина Смирнова — 3.000 тенкĕ пачĕç.

Пирĕн çак пĕчĕк парне тăшмана хăвăртрах аркатса тăкма Хĕрлĕ Çара пулăштăр.

Колхоз председателĕ М. И. ВЯЗОВ.

Колхоз счетоводчĕ И. К. ВЯЗОВ.

Чăваш АССР-ĕ, Муркаш районĕ, „Крестьянин“ колхоз

Колхоз председательне М. И. Вязова
Колхоз счетоводне И. К. Вязова

«Крестьянин» колхозăн колхозникĕсемпе колхозницисене, Хĕрлĕ Çар фончĕ валли 50.000 тенкĕ укçа пухса панăскерсене, манран тăванла салам калăр тата Хĕрлĕ Çар тав туни çинчен пĕлтерĕр.

И. СТАЛИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮНĔН 20-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июнĕн 20-мĕшĕнче КАРЕЛИ перешеекĕнче ЛЕНИНГРАД фрончĕн çарĕсем, Маннергейм линине татнă вырăна аслăлатса пырса, финсен Выборг патĕнчи çирĕплетнĕ районĕн туйтипе шалти кукăрĕсенче тăшман хирĕç тăнине çĕнтернĕ те ВЫБОРГ хулипе крепоçне штурмласа туртса илнĕ. Унсăр пуçне, фронт çарĕсем, наступлени туса пырса, халăх пурăнакан 60 пункта ытла йышăннă, вăл шутра НУОРА, ЮЛЯСОММЕС, ЮЛЯСЯЙНИЕ, МАННИКОЛА, ЛУККЮЛЯ, КИРИККОМЯКИ, КОПРАЛА, КАУНИЛА, ПЕЛЛЯККЯЛЯ ятлă ялсем тата КАЙСЛАХТИ, СОММЕ, СЯЙНИЕ, СУУРПЕРО, ПЕЛЛЯККЯЛЯ, РИСТСЕППЯЛЯ, ХЕЙНИСКИ ятлă чугун çул станцийĕсем.

Ытти фронтсенче улшăнусем пулман.

Июнĕн 19-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 38 самолетне персе ӳкернĕ.

ИЮНĔН 21-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июнĕн 21-мĕшĕнче пирĕн çарсем ОНЕГА кӳллинчен çурçĕртерехре наступлени пуçласа янă, МЕДВЕЖЬЕГОРСК хулинчен хĕвелтухăçнерехре тăшман оборонине татнă, халăх пурăнакан темиçе пункта туртса илнĕ. Вăл шутра — ПОВЕНЕЦ, ПИНДУШИ ятлă пысăк рабочи поселоксем, совхоз ПУШНОЙ, ВЕРХОВЬЕ, БРЮХОВО, САЛМА, КАМСАГУБА ятлă ялсем тата Мурманск чугун çулĕ çинчи ВИЧКА ятлă чугун çул станцийĕ. Пирĕн çарсем МЕДВЕЖЬЕГОРСК хули патне таччăнах пырса çитнĕ те тăшманпа хула тулашĕнче çапăçма тытăннă.

ОНЕГАПА ЛАДОГА кӳллисем хушшинче пирĕн çарсем наступлени пуçласа янă, СВИРЬ шывĕн кăнтăр енчи плацдармра тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та халăх пурăнакан 100 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра Ленинград облаçĕнчи ВОЗНЕСЕНЬЕ район центрĕ, ГАНИНА, ЕРОСЕЛЬГА, ПЕТРОВСКАЯ, ПОСАД, РОВСКОЕ, ГОМОРОВИЧИ, ПЕРТОЗЕРО, ШЕМЕНИЧИ, БАРДОВСКАЯ, ДЕМИДОВСКАЯ, НИСЕЛЬГА, СВИРЬСТРОЙ ятлă пысăк пунктсем. Çапла вара пирĕн çарсем финсен СВИРЬ шывĕн кăнтăр енчи паха плацдармне пĕтерсе тăкнă.

ЛОДЕЙНОЕ ПОЛЕ районĕнче КАРЕЛИ фрончĕн çарĕсем, СВИРЬ шывĕ урлă каçса кайса, тăшман оборонине татнă. СВИРЬ шывĕн çурçĕр енче плацдарм тунă.

КАРЕЛИ перешеекĕнче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 50 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра СОРВАЛИ (ЛИННО-САРИ утравĕ çинче, ВЫБОРГ хулинчен 2 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре), ТАММИСУО, ПАТАКАХИА, ТУОККОЛА, ХЕЙНИОКИ, САЛА-ПАККОЛА, КЯНТЮМЯ ятлă ялсем тата ТАММИСУО ятлă чугун çул станцийĕ.

Ытти фронтсенче улшăнусем пулман.

Июнĕн 20-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 24 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Карели перешеекĕнче Ленинград фрончĕн çарĕсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă. Пирĕн пехотăпа танксем, татăклă та хăватлă пыра-пыра çапса, финсем совет чаçĕсене малалла куçма чарма хăтланнине пурне те пĕтере-пĕтере тăкнă. Пĕр участокра тăшман çапăçăва учебнăй батальона кĕртсе янă, çав батальонра пин çын таран пулнă. Çапăçма пыракан финсене пирĕн çарсем тупăсемпе тата миномечĕсемпе хăватлăн пеме тытăннă. Тăшман батальонне пысăк çухатусем кӳнĕ. Чĕррĕн тăрса юлнă çынсем вăрмана тарса саланса пĕтнĕ. Тепĕр участокра тăшман хăй çарĕсене кӳлĕ урлă каçарма хăтланнă. Аниканов лейтенантпа Коновалов лейтенантăн хăй тĕллĕн çӳрекен туписен экипажĕсем кӳлĕ урлă сывнă каçă çине пеме тытăннă. Снарядсем тӳрех пырса тивнипе гвардеецсем икĕ десант баржине тата тăшман пехоти ларса пынă темиçе мотор лодкине шыва путарнă. Финсен çакăнта пĕр вĕлернисене кăна шутласан та, 300 салтакпа офицера çити пĕтнĕ.

Пирĕн авиаци çаплах финсен çарĕсемпе çулйĕрĕсене пыра-пыра çапнă. Элисенвара чугун çул станцине тапăнса, совет летчикĕсем 180 вагон ытла, 12 склад пĕтерсе тăкнă, чугун çул линийĕсене ишнĕ. Станци территорийĕнче вăйлă пушарсем тухнă, пушарсенче взрывсем пулнă.

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн летчикĕсем Выборг заливĕнче тăшман карапĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Финсен пĕр транспорчĕ, хăвăрт çӳрекен 7 десант баржи, пĕр тральщик тата хуралта çӳрекен катер шыва путнă.

Кун каçиччен сывлăшри çапăçусенче нимĕçсемпе финсен 19 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Совет Союз Геройĕн Осиповăн, Ущевăн тата Старостинăн торпеда катерĕсем (Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕ) Финн заливĕнче нимĕçсен 2 миноносецне шыва путарнă. Пирĕн катерсем тепĕр ушкăнĕ тăшман тральщикне путарнă.

* * *

Баренц тинĕсĕнче пирĕн карапсем тăшманăн 6.000 тонна таякан суднине шыва путарнă.

* * *

Мозырь хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре совет разведчикĕсен кĕçĕн лейтенант Король ертсе пыракан отрячĕ çĕрле шыв урлă каçнă та, икĕ ушкăна пайланса, вăрманти çул çинче засада тунă. Ирхине çав çулпа тăшман отрячĕ пынă. Гитлеровецсем засада патне çитсен, пирĕн разведчиксем вĕсем çине гранатăсем вăркăнтарма тытăннă, автоматсемпе пеме пуçланă. Нимĕçсем каялла чакма тытăннă, анчах та вĕсене пирĕн разведчиксен иккĕмĕш ушкăнĕ пеме тытăннă. Нимĕçсен икĕ офицерĕпе 16 салтакне вĕлернĕ. Пирĕн разведчиксем 2 нимĕç офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Литовец партизанĕсен «Оккупантсене вилĕм», «Вильнюс», «Çĕнтерӳ» тата Костас Калинаускас ячĕпе тăракан отрячĕсем 7 кун хушшинче тăшманăн хĕçпăшалпа салтаксем турттарса пыракан 10 эшелонне ӳпĕнтерсе янă. 8 паровоз, 17 вагон тата танксемпе тупăсем тиесе пынă 32 платформа çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ.

* * *

Финсен 1-мĕш эгерски батальонĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Онни Кампи çапла каласа кăтартнă: «Карели перешеекĕнчи оборона сооруженийĕсене тума пайтах япала тата вăй-хал нумай пĕтнĕ. Финсен çар влаçĕсем çĕршыври мĕнпур грузовой автомашинăсене мобилизацилерĕç те çав строительствăн управленине пачĕç. Финсен армийĕн мĕнпур строительнăй батальонĕсем нумай уйăхсем хушши тимĕрпе бетон дотĕсем, блиндажĕсем, надолбсемпе эскарпсем тунă çĕрте ĕçлерĕç. Никам пырса çĕмĕрейĕмĕ тесе шутланă пирĕн укрепленисене вырăс çарĕсем аркатса тăкрĕç».

Финсен сыранри оборона бригадинчен тыткăна лекнĕ салтак Паасанен çапла каласа кăтартнă: «Вырăссем калама çук хăвăрт наступлени туса пычĕç. Йĕркеллĕн хирĕç тăрса çапăçасси çинчен каламалли те пулмарĕ. Пирĕн тупăсем пĕр-икĕ хут та пеме ĕлкĕреймерĕç. Пирĕн ирĕксĕрех хамăрăн пĕтĕм техникăна пăрахса тармалла пулчĕ. Пĕрсе тăмалли позицисем çинче эпир 24 юсавлă тупă пăрахса хăвартăмăр».

Финсен 1-мĕш полкĕнчен тыткăна лекнĕ прапорщик Тойво Хяннинен çапла каласа кăтартнă: «Финн офицерĕсем пурте Карели перешеекĕнчи укрепленисене никам та çĕнтереймĕ, вĕсем темле тапăнăва та чăтма пултармалла тесе шутлатчĕç. Анчах та совет артиллерийĕн хăвачĕ пире хăратса пăрахрĕ. Ун пек вут-хĕме пĕрнтен нихăçан те вăрçă пуçланăранпа та курман. Çав кунсенче эпир çакна пĕлтĕмĕр: нимĕнле, хуть те мĕн пек вăйлă укрепленисем пулсан та, вырăссене чарма пултарайрас çук».

Ленинградра «Ленинграда паттăррăн хӳтĕлени» ятлă пысăк выставка пур. Йышлă экспонатсемпе документсем Ленин хулишĕн пынă аслă кĕрешӳĕн историне кăтартса параççĕ. Вăл кĕрешӳ Хĕрлĕ Çар тăшмана чаплă çĕнтернипе, Гитлерăн чи лайăх дивизийĕсене аркатса тăкнипе вĕçленнĕ. Нимĕçсене Ленинград патĕнче аркатса тăкнине нумай экспонатсем уççăн кăтартса тăраççĕ. Пĕр залра пĕтĕмпех Ленинград фрончĕн çарĕсем тытса илнĕ трофейăсем.

Укерчĕк çинче: «Нимĕçсене Ленинград патĕнче аркатса тăкни» ятлă тĕп зал. 1944 çулхи февраль уйăхĕнче Хĕрлĕ Çар тытса илнĕ трофейăсем. Сулахайра—240 миллиметр калибрлă тупă, ăна нимĕçсенчен Красное Село патĕнче тытса илнĕ.

Р. МАЗЕЛЕВПА В. ФЕДОСЕЕВ фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

ИЛЬЯ ЭРЕНБУРГ

ИЮНЬ...

Пурне те аса илер: этем ăсĕмĕ — йывăç тымарĕсем пекех. Унчухне куçа шартарăвăн ир пуçланнă. Ялтăçалăх выставкин паркĕнче утма çулсене шăлнă. Сынсем дачăсене кайма пуçтараннă, Гурзуф е Питры çинчен ĕмĕтленнĕ. Выпускниксем кун пулнă, сирень хăйĕн çеçкине тăкнă, ачасем ахăлтатса кулнă. Анчах Литва çумĕсем тăрăх вара хăранипе ăсран кайнă хĕрарăмсем чупма тытăннă та ĕнтĕ, пограничниксен юнĕ чечен курăк çине тăкăннă...

Нимĕçсем çав куна кĕтсе илме нумайранах хатĕрленнĕ. Кашни утăма мĕнле пусмаллине шухăшласа хунă. Мюллер — Киевалла çул тытнă. Шульц — Ленинградалла талпăннă, Квачке — Мускавалла васканă. Вĕсем, вигере нумай тăнă лашасем пек, тӳсеймесĕр тулхăрнă, урисемпе тапăртаттарнă. Вĕсем таптаса аманса пĕтернĕ Польшăн хулисемпе ялĕсенче тăнă. Вĕсем хушшинче — Парижран 8 машăр сехет çаратса тухнă Шрамке, 15 поляк хĕрне ирĕксĕрлесе пусмăрланă Штольц, Акрополь çине хăпарса Афродитăн мрамор пӳрнине çапса хуçнă Гайнц пулнă. Вĕсен алăксенче çакăн пек справочниксем пулнă: «вырăссем — аялти пусăмра тăракан раса, вĕсем пăхăнса пурăнма тунă сынсем». Вĕсен кĕсйĕ словарьсем пулнă: «Ĕне пар», «Стена çумне тăр», «Маншăн ала выртт», «Хăвна валли вилĕм шăтăкĕ алт». Çĕпĕр тайгинче ăташса каймалла ан пултăр тесе, вĕсен компассем пулнă. Урала ситмелле пултăр тесе, вĕсен картăсем пулнă. Вĕсен танксем, пикировка тăвакан самолетсем, минометсем тата пĕтĕм Европăран çаратса пухнă автомобильсем пулнă. Вĕсен оберфюрерсем, штурмбаннфюрерсемпе ытти тĕрлĕ «фюрерсем» пулнă. Вĕсен вунă государствăна çаратса, Европа çине Эйфель башни çинчен сурнă «фюрерĕ» пулнă. Султалăкри чи кĕске каç вĕсем хĕвелтухăçĕнелле тухса вăрканнă. Вĕсем автоматсемпе ачасем çине пенĕ. Вĕсем хĕрарăмсене танксемпе таптанă. Вĕсем шунă, ишнĕ, вĕçнĕ.

Виçĕ çул виçĕ ĕмĕр мар тесçĕ, анчах пире виççĕр çул пурăннă пекех туйăнать. Мĕн чухлĕ сывăх тăвансемпе туссене çухатрăмăр эпир! Пирĕн çĕнтерӳсем пĕлĕтрен ӳкмен, вĕсем чи лайăх сынсен юнĕпе шăварнă çĕр çинче ӳссе ситĕннĕ. Вата сынсем хăйсен ачисене мĕнле пăхса ӳстернине, пĕчĕк ывăл ачи вĕри шатра чирĕпе чирлесен мĕнле хуйхăрса çуннине, хăйĕн ывăл ачине мĕнле те пулин çăмăлрах пултăр тесе, ĕçмесĕр те çимесĕр тенĕ пек пурăннине пĕлесçĕ. Ывăл ача ӳссе пынă, вĕреннĕ. Вăл юратмалли, ĕмĕтленмелли, хастарланмалли çула тин кăна кĕрсе пынă. Ака унăн пурнăçне вакă мотылл ванчăкĕсем пырса татрĕç те...

Чĕрĕк ĕмĕр хушши ситĕнтерсе пынă эпир хамăр çĕршыва, тар юхтарса, вăя хĕрхенмесĕр ĕçленĕ. Эпир Сталинградри, Воронежри, Харьковри, Орелри, Минскри çĕнĕ çуртсемпе мухтаннă. «Вилĕ пуç» ятлă дивизири Гейнцпа Бальвой танкистсем ака мĕн каласа параççĕ: «Эпир Гĕркиренех пурне те çунтарса пынă чухне, гауптштурмфюрер Лютце çурт çине кăтартса: «ку тĕтĕмнелле лайăх çунать!» — тесе кăшкăратчĕ. Эпир, çунакан çуртсем çывăра ташласа çӳресе, юрăсем юрлаттăмăр».

Вĕсем пирĕн асамлăсене пĕтерсе лартасшăнччĕ. Ялтăра вĕсем: «Ăçта кунта Панина графиньăн кăмаки?» — тесе ыйтнă. Лев Толстой пурăннă çурта шыраса тупса, вĕсем унта лаша вити туса хунă. Новгород хулинчи Кремльте çаратнă ылттăнран вĕсем пепельницăсемпе эрех ĕçмелли бокалсем тутарнă. Вĕсем кăмакасене кĕнекесемпе хутнă. Вĕсем музейсенчен ыйтă ăшаламалли мунчасем туса хунă.

Вĕсем пирĕн ĕмĕтсене, тăванлăхпа ырлăха шанса тăшне туртса илме кансăр-нă. Пирĕнтен чи йăвашшисем те вара хĕçпăшала ырласа паттăрсен ретне тăчĕç. Халĕ пирĕн çĕр ялана çинчен кăна — тавăрасси çинчен кăна шухăшламалла.

Хуйăх илмеллине илет, памаллине — парать. Хуйăх пире пысăк ăс пачĕ. Сапла тăмран хĕртсе çирĕп япаласем тăвасçĕ, çапла хурçа хĕртессĕ. Çапăçу хирĕнче эпир чи ăслă кĕнекесенче çуккине вуласа илтĕмĕр. Эпир чăн-чăн илеме суя илемрен, чăн-чăн ырлăха суя ырлăхран уйăрса илме вĕрентĕмĕр. Пирĕн кăмăл ытларах хаярланчĕ. Виçĕ çул каярах пысăккăн курăннă инкекĕсемпе хавасланăсем çинчен эпир кăшт кулараx аса илетпĕр. Эпир паркри шăлса тасатнă сукмаксем тăрăх утнă, эпир чăтлăх витĕр утма вĕрентĕмĕр. Эпир çакна ăнлантăмăр: тĕнĕй вăл сĕтел çинче ларакан лампочка мар иккен, лампочкăна пăрăтан та çутă сутăлса каять...

Пирĕн ырă идейăсем, сутсантăлăк пулнăлăхĕсем, халăх таланчĕсем нумай пулнă. Анчах эпир çапăçу хирĕнче татах та нумайрах вĕренсе ăс илтĕмĕр. Ĕç кунта вăрçă пуçланăсан рядовой салтаксем пулнă сынсем халĕ майорсем пулса тăнинче мар. Сăмах кунта çакăн çинчен пырать: 1944 çулхи рядовой салтак 1941 çулхи рядовой салтак мар. Сын çинчен: «Вăл ситĕнсе ăр пулчĕ» тесçĕ. Эпĕ — пирĕн салăх ӳссе аслăланчĕ те чаплăланчĕ, тесе калăтăп.

Вăрçă пуçланичченех пирĕн çĕршыва ыра курман чикĕ леш енчи сыннисем — Российăна «тăм уралла улăп» тетчĕç. 1941 çулхи кĕркунне вĕсем: «Ку улăп кĕçех ишĕлсе анать», тетчĕç. Вĕсем çакна ăнланмарĕç: эпир чакнă, анчах парăнман. Вĕсем çакна пĕлмен: Хĕрлĕ Çар хăйĕн ĕçĕсем ăнăçсăр пулнинчен çĕнтерме вĕренсе пычĕ. Пирĕн заводсем Уралта, Казахстанра, Çĕпĕрте çĕнĕрен суралнине вĕсем курман. Халĕ çак улăп малалла утать. Вăл Румыние кĕчĕ. Тĕнче ĕнтĕ пирĕн вăй çинчен калаçать. Чи чаплă ĕмĕрсенче те, Суворов ячĕ Европăна кисретнĕ чухне те, Наполеон сирпĕнсе аннă чухне те, Россия халăхĕ пек, виçĕ çул хушши хăрушă вăрçă пынă хыççăнхи пек, хавалăн курăнман. Виçĕ султалăк тĕнчери çанталăкĕ улшăнтарчĕ, картăсене çĕнĕлле ӳкерттерчĕ, историе çĕнĕлле çыртарчĕ. Халĕ ĕнтĕ пур халăхсем те çакна кураççĕ. Совет Союзĕ вăл — ирĕклĕхĕн пĕрремĕш салтакĕ, çĕнтерӳĕн пĕрремĕш гимерĕ.

Ăçта вĕсем, 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче савăнăçлăн сурккаласа пирĕн çĕр çине çĕмĕрсе кĕнĕ нимĕçсем? Вĕсенчен сахалăшĕ чĕрĕ юлнă. Сав «ветерансем» Атăл çĕçенхирĕсене е Кавказ тăвĕсене аса илме пултараççĕ. Вĕсем нумайăшне курчĕç. Вĕсем туристсем пулнă пулсан: «Пирĕн ĕç ăнчĕ», тесе калама пултарнă пулĕччĕç. Анчах вĕсем туристсем мар, вĕсем, ют çĕрсене тапăнакансем, халĕ ĕнтĕ хăйсен тĕлĕкĕсем сирĕлсе кайнине кураççĕ. Виçĕ çул иртнĕ хыççăн: «эпир Германие хӳтĕлетпĕр» тесе кăшкăрасшăнах хĕвелтухăçĕнелле «пурăнмалли çĕр талккишĕ» шырама кайма кирлĕ пулнă-ши вара?

Чăн та Германие сирпĕтсе антарман-ха. Германин танкĕсем те, салтакĕсем те нумай-ха. Анчах халĕ ĕнтĕ вăрçă мĕнпе пĕтессине кашни сын пĕлет. Геббельс: «Пирĕн чăтăмлă пулмалла», тесе пустуях çуйăхать. Сав сăмахсем вĕсем хăйсенчен хăйсем мăшкăллана пек кăна илтĕнеççĕ. Вăрăсем — геройсем мар, хурахсем — паттăрсем мар. Нимĕçсене çапăçăва хырăмĕ ертсе кайнă. Халĕ ĕнтĕ вĕсем хăйсен тапăнăвĕ ăнăçманнине кураççĕ.

Вăрçăн виççĕмĕш çулĕ тăшмана Россиерен хăваламалли çул пулчĕ. Тăваттăмĕш çул — тăшмана юлашки хут хаярран суд тумалли çул пулса тăмалла. Султалăк каярах, июнь кунĕсенче, нимĕçсем Курск шукăрĕ çине наступлени тума хатĕрленнĕ. Вĕсем унчухне Сталинградăн пĕлтерĕшне пĕтĕмĕшпех ăнланса ситеймен пулнă-ха. Вĕсем хăйсен кивĕ чăпĕпе çĕнĕ «тигрĕсем» çине шаннă. Курск çинче наступлени туни Германин юлашки наступленийĕ пулчĕ. Кун хыççăн вара фрицсем Донец патĕнчен Прут патнелле, Орел патĕнчен Ковель патнелле тарма тытăнчĕç. Эпир Выборг çинелле наступлени туни нимĕçсене юлашки татăклă штурмсен талккăрĕ ситнине кăтартса пачĕ. Нимĕçсем Яссы е Хельсинки хулисем чарăнса тăмалли юлашки вырăнсем тесе ан шухăшлаччăр. Сав хуласем — Берлин çулĕ çинчи станцисем кăна.

Пирĕн çĕр çинче виçĕ çул хушши пынă çапăçусем акăлчансемпе америкăнецсене Франције пырса кĕме май пачĕç. Халĕ тискер кайăка савăрса илесси пуçланчĕ. Нимĕçсене çав ункаран вĕсен «вĕçекен» бомбисем те, шăрчăк пек сиксе çӳрекен фон-папенĕсем те çăлса хăварайманĕ. Италире пирĕн союзниксем Флоренци патнелле сывхарса пыраççĕ. Францире союзниксем, 12 кун хушши çапăçса, хăйсен плацдармне тĕрекленетрĕç кăна мар, Котантен çурутравне те касса татрĕç. Пуçласси кăна ывăр... Сакăнпа пĕрлех французсем захватчиксен тылĕсене тапăнаççĕ. Сав вăхăтрах Рунштедт, çĕнĕ мыскарасем кĕтсе, Франци тăрăх талкăшса çӳрет.

Пĕтме пуçланă ĕç вăрахa тăсăлма пултарать. Пирĕн умра вăрă-хуравсен нумай миллионлă пĕрлешĕвĕ, вĕсем хăйсене çăлăнса тухмалли шăтăксем шыраççĕ. Вĕсем вăййа ничьяпа туниe вĕçлесшĕн, пуçланă партие сирĕм çуллăха хăварасшăн. Анчах эпир хăлламăпăр, эпир чарăнса тăмăпăр: эпир малтанхи гитлеровецсене çапнă, юлашкийĕсене те çапса вĕлерĕпĕр. Вĕсем найкăшма шут тытсан, пирĕн кăмăл çемçелмĕ: Мускав, уйрăмах 1941 çулхи кĕркуннe тӳссе ирттернĕ Мускав, куççуле ĕненмест.

Пире хĕвеланăçнелле хапсăнчăк шухăш мар, совесть ертсе пырать. Эпир гитлеровецсен тискерлĕхĕшĕ хаярлăхне, вĕсем вылăхла хăтланнине куртăмăр. Вĕсене каçару пулмасть! Хăвшăн каçарма юрать, ачашăн каçарма çук. 1941 çулхи октябрĕн 20-мĕшĕнче Мариуполь хулинче нимĕçсем хӳтĕлĕхсĕр сынсене вĕлерме илсе кайнă. Палачсем телейсĕр сынсене хывăнма хушнă. Пĕчĕк Владя, мĕн пулса иртнине ăнланмасăр, хăйне мĕн кĕтнине пĕлмесĕр: «Анне, шыва кĕретпĕр-им?...» — тесе ыйтнă. Владьăна вĕлерекенсене кам каçарма пултартăр-ха?

Симеизри обсерваторире нимĕçсем лаша вити тунă. Астрономсем тӳпери çăлтăрсене сăнаса тĕпченĕ площадка çине фрицсем «тула тухнă». Сав ирсĕрсене эпир пурне те пĕлĕтпе тупа тумăпăр.

Эпир Иена телескопĕсене çĕмĕрмĕпĕр. Гете пурăннă çурта сунтармăпăр. Эпир фашистсем мар, эпир нимĕç ачисен тутисене синильнăй кислотăпа сĕрме тытăнмăпăр. Вĕсем пирĕн пата нихăçан та килме ан пултарччăр тесе, эпир вĕсем патне пырăпăр.

Россия виçĕ çул хушши кĕрешет. Эпир паян унчухнехи июнĕ аса илетпĕр. Эпир урăх сынсем пулса тăтăмăр. Анчах эпир 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнчи ире манмăпăр. Сав иртен нимĕçсен тискер ĕçĕсен списокĕ пуçланать. Эпир Берлина пырса ситес кун мĕнле пуласшне — уяр е çумăрлă е сивĕ кун пуласшне эпĕ пĕлместĕп. Анчах нимĕçсен столицин вăрăм та тĕксĕм урамĕсем тăрăх пынă чухне пирĕнтен кашниех июньри ир çинчен, çурмалла касса уйăрнă пурнăç çинчен шухăшласа илĕ. 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче пуçланнă трагеди унта — Курфюрстендамра, Унтер-Ден-Линденра вĕçлĕнĕ. Сирпĕнтерсе антарнă Германин пуçĕ çинче саблĕне хуçса, эпир çапла калăпăр: пĕттĕр, урăх нихăçан та ан пултăр! — тейĕпĕр.

ПĔТĔМ СОЮЗРИ ШАХМАТ ЧЕМПИОНАЧĔН ИТОГĔСЕМ

Актер çуртĕнче Пĕтĕм Союзри XIII-мĕш шахмат чемпионачĕ ячĕпе вечер пулса иртнĕ. Матчăн тĕп судьи Н. М. Зубарев турнирта мала тухнисен ячĕсене вуласа панă.

Пĕрремĕш вырăна гроссмейстер Михаил Ботвинник тухнă, вăл 16 очкоран 12,5 очко выляса илнĕ. Михаил Ботвинника Совет Союзĕн 1944 çулхи чемпионĕ ятне панă. Иккĕмĕш вырăна Мускав чемпионĕ гроссмейстер В. Смыслов тухнă (вăл 10,5 очко выляса илнĕ), виççĕмĕш вырăна — Украина чемпионĕ мастер И. Болеславский, тăваттăмĕш вырăна — С. Флор йышăннă. Пиллĕкмĕшпе улттăмĕш вырăнсене спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ В. Макогонов (Баку) тата Литва ССР-ĕн чемпионĕ В. Микенас йышăннă.

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Пĕтĕм Союзри физкультурăпа спорт комитечĕ турнирта мала тухнă 6 çынна хаклă призсемпе дипломсем парса наградăланă.

Кунсăр пуçне, Андрэ Лилиенталь гроссмейстера турнирта çĕнтернисемпе выляса чи нумай очко пухнăшăн хăйне уйрăм приз панă. Юлашки 5 турта чи нумай очко выляса илнĕшĕн В. Рагозинпа А. Толуш мастерсене призсем панă. Вĕсем иккĕшĕ те 5 очкоран 3,5-шер очко выляса илнĕ. (ТАСС).

Америка авиацийĕн ĕçĕсем

1.500 БОМБАРДИРОВЩИК ГЕРМАНИН НЕФТЬ ТАСАТАКАН ЗАВОЧĔСЕМ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНĂ.—1.000 ЙЫВĂР БОМБАРДИРОВЩИК БЕРЛИНА ТАПĂННĂ

ЛОНДОН, июнĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăн Европăри экспедицилле вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтернĕ: Америкăн йывăр бомбардировщикĕсем июнĕн 19-мĕшĕнче кăнтăрла Па-де-Кале районĕнче Германин «самолет-снарядсем» вĕçсе хăпармалли базисене икĕ хутчен тапăннă, çавăн пекех тата Германин Бордо районĕнчи темиçе аэродромне тапăннă. «Самолет-снарядсен» вĕçсе хăпармалли базисене малтанхи хут ирхине тапăннă. Бомбăсене приборсем кăтартнă тăрăх пĕлĕтсем витĕр пăрахнă. Каçхине Америка бомбардировщикĕсем çав базăсене иккĕмĕш хут атакăланă. Ку хутĕнче бомбăсен пĕр пайне тĕллесе пăрахнă. 7 бомбардировщикпа 16 истребитель хăйсен базине таврăнман.

Германи истребителĕсем сывлăшра курăнман.

ЛОНДОН, июнĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăн Европăри сывлăш-çар вăйĕсен командованийĕн штабĕ çапла пĕлтернĕ: июнĕн 20-мĕшĕнче кăнтăрла 1.500 бомбардировщик ытла нефть тасатакан йышлă заводсем çине, синтетически нефть завочĕсем çине, танксен паркĕ çине, самолетсен пайĕсене тăвакан завод çине тата Па-де-Кале районĕнчи самолет-снарядсем вĕçсе хăпармалли базăсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбардировщиксене истребительсен пысăк соединенийĕсем хӳтĕлесе пынă. Германире Гамбургри, Ганноверти, Магдебургри нефть завочĕсене, Магдебург çывăхĕнчи танксен паркне тата Брауншвейг районĕнчи авиаци заводне тапăннă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çав объектсене тапăннă самолетсен пĕтĕм хисепĕ 3.000 самолета çитнĕ пуль тесе шутлаççĕ.

ЛОНДОН, июнĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн пин ытла йывăр бомбардировщикĕ Берлина тата Германири ытти объектсене тапăннă.

Америка авиацийĕ Вăтаçĕр Германири çарпа промышленность объекчĕсене тапăнни

Июнĕн 21-мĕшĕнче Америкăн бомбардировочнăй авиацийĕн чылай пысăк соединенийĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, тăшманăн Вăтаçĕр Германири çарпа промышленность объекчĕсене тапăннă.

Америкăн çав тапăнура пулнă самолечĕсем Совет Союзĕнчи авиабазăсем çине анса ларнă.

Летчиксем каланă тăрăх, бомбăсем пăрахас ĕç ăнăçлă пулса иртнĕ. (ТАСС).

«ВĔÇЕКЕН КРЕПОСТЬ» ЙЫШШИ САМОЛЕТСЕМ «ВИТĔР ВĔÇСЕ ТУХСА» ТУНĂ ОПЕРАЦИ ХЫÇÇĂН СОВЕТ АЭРОДРОМĔ ÇИНЕ АНСА ЛАРНИ

Н. ХУЛИ, июнĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Совет территорийĕнчи пĕр аэродром çине Америкăн «Вĕçекен крепость» йышши самолечĕсен пысăк ушкăнĕ анса ларнă. Англирен вĕçсе тухса, вĕсем Германири çарпа промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă, унтан çав задание пурнăçланă хыççăн Совет территорийĕ çине вĕçсе килсе анса ларнă. Çак «витĕр вĕçсе тухса тунă» операци çав тери ăнăçлă иртнĕ.

Самолетсем кăтартнă вăхăтра аэродром тĕлне вĕçсе пыраççĕ. Вĕсем нумайăн, моторсем шавлани сынсен сассине путарса лартать. Самолетсем питĕ йĕркеллĕн çĕр çине анса лараççĕ. Кабинăсенчен летчиксем пĕрин хыççăн тепри тухаççĕ. Паллах ĕнтĕ, вăрах вĕçнĕ хыççăн вĕсем ывăннă, анчах та вĕсен ывăнни палăрмасть. Вĕсем хăйсем тума тивĕçлĕ ĕçе чыслăн тунипе савăнса кулаççĕ.

Аэродромра летчиксене совет командованийĕн Перминов генерал-майор ертсе пыракан представителĕсем тата Америка командованийĕн представителĕсем хирĕç тухса кĕтсе илеççĕ. Вĕсем летчиксене чунтан чĕререн саламлаççĕ. Çав операцие ертсе пынă полковника пĕр çыхă чечек параççĕ, ăна задание çав тери чаплă пурнăçланăшăн тав тăваççĕ. Савăнтах «Вĕçекен крепоçсем» патĕнче летчиксем хăйсем мĕн курни-туйни çинчен каласа параççĕ. Вĕсем «витĕр вĕçсе тухса тунă» операцин результачĕсемпе савăнаççĕ.

Çав операцие ертсе пынă полковник çапла калать:

— Операцие тума тĕплĕн хатĕрленнĕ, тĕплĕн шухăшласа хунă, ăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕ. Операци тунă чухне мĕн пулма пултарассине пурне те малтанах шухăшласа хунă. Берлинран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри çарпа промышленность объекчĕсене (вĕсем çине бомбăсем пăрахасси пирĕн тĕллев пулнă) калама çук вăйлă пырса çапнă. Бомбăсем пăрахнипе тухнă пушарсен тĕтĕмĕ 8.000 фут çӳллĕшне хăпарнă. «Витĕр вĕçсе тухса тунă» операци вăл пирĕн пĕрлехи тăшмана — гитлерла Германие—калама çук вăйлă пырса çапни пулса тăрать. Савăн пек туни бомбăсем пăрахнин уссине ӳстерет, çавăн пек тунипе пула союзниксен авиацийĕ Германипе унăн вассалĕсен территорийĕнчи кирек хăш пункта та атакăлама пултарать. Кунсăр пуçне, «витĕр вĕçсе тухса тунă» операцисем тăшманăн сывлăшран тапăннинчен хӳтĕлемелли хатĕрĕсене тĕрлĕ çĕре сапалатарса ярать, çапла вара вĕсене вăйсăрлатать. Нимĕçсен пĕрлешӳллĕ нацисен сывлăш-çар вăйĕсен çав боевой туслăхĕн хăватне тӳссе курĕç-ха.

Аэродромра Америка кинооператорĕсен пысăк ушкăнĕ пулнă, вĕсен пуçĕнче Американа кăларнă «Российăшăн çапăçни» ятлă паллă фильмăн режиссерĕ Анатоль Литвак пулнă. Вĕсен аппарачĕсем «Вĕçекен крепоçсене» сывлăшра тата анса ларнă вăхăтра ӳкерсе илнĕ, вĕсене аэродромра хирĕç тухса илнине те ӳкерсе илнĕ.

Летчиксем хăйсене кăтартнă çуртсене саланаççĕ, апатланаççĕ, канаççĕ. Каçхине каллех совет летчикĕсемпе, аэродромра ĕçлекен çынсемпе тĕл пулса калаçаççĕ, пĕрпĕринчен ыйтаççĕ, пĕр-пĕрне каласа кăтартаççĕ. «Вĕçекен крепость» самолетсене ертсе пыракан летчиксем хăйсем çинчен, «витĕр вĕçсе тухни» çинчен нумай каласа параççĕ, хăйĕн территорийĕнче хăнана кĕтсе илнĕ пек кĕтсе илнĕ çĕршыв çинчен, унăн çыннисем çинчен — çапăçури хăйсен тусĕсем çинчен—нумай илтеççĕ.

ХЕЛЬСИНКИРИ ХАЛĂХА КĂЛАРСА ЯРАССИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНĔ

ЛОНДОН, июнĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Финляндин «Лахти» ятлă официальнăй радиостанцийĕ паян çар влаçĕсем ятарласа чĕнсе каланине сарнă. Унта çапла каланă: «Вырăссем Карелире питĕ вăйлă наступлени туса пынă пирки Хельсинкире пурăнма кирлĕ мар çынсен пурин те, пуринчен ытла ачасен, Хельсинкирен тухса каймалла», тенĕ.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедицилле вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июнĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн паян ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Котантен çурутравĕ çинче Çурçĕрти пĕтĕм фронт талккăшĕпех пĕрлешсе атакăланине пула, Шербур портне халь артиллери персе тăрать. Брикбек хулине ирĕке кăларнă хыççăн союзниксен çарĕсем Ровиль-Ла-Биго хулинчен иртсе кайнă. Валонь хулинчен хĕвелтухăçнерехре те пирĕн çарсем кăшт малалла куçнă. Ытти чаçсем Валоньрен икĕ мильăра выртакан пунктсене çитнĕ, Валоньпе Брикбек хушшинчи çула татнă. Хаяррăн çапăçнă хыççăн тăшмана Тилли-Сюр-Сель хулинчен каллех хăваласа кăларнă.

Кăнтăрла вĕçекен йывăр бомбардировщиксем июнĕн 19-мĕшĕнче кăнтăрла Па-де-Кале районне атакăланă, Германин самолет-снарядсем вĕçсе хăпаракан станцийĕсем çине пĕлĕтсем витĕр бомбăсем пăрахнă. Кун каçиччен тунă çак иккĕмĕш тапăнуран 3 бомбардировщик хăйсен базисене таврăнман».

«Çанталăк начар тăнă пулин те, союзниксен самолечĕсем суднăсене хӳтĕлесе пынă тата çыран çийĕнче хуралласа çӳренĕ. Истребительсем тăшманăн фронт хыçĕнчи паровозĕсене, моторлă транспортне, баржисене тата склачĕсене пулеметсемпе тата тупăсемпе пенĕ».

* * *

ЛОНДОН, июнĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС. Союзниксен экспедицилле вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсем Шербур хулин тулашĕнчи оборонине атакăлаççĕ. Монтебур хулине ирĕке кăларнă. Пирĕн çарсем виçĕ енчен пырса Валонь хулинчен иртсе кайнă. Валонь хулинче халь хаяр çапăçусем пыраççĕ. Эпир Тилли-Сюр-Сель районĕнче çирĕп позицисем йышăнса тăратпăр. Енер Отто çывăхĕнче хаяр çапăçусем пынă.

Çапăçусем пыракан районра çанталăк начар тăнă пирки авиаци паян кăнтăрла çитиччен вăйлах кĕрешеймен».

* * *

ЛОНДОН, июнĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Шербур патнелле пыракан çарсем çав тарăн шывлă порта хӳтĕлесе тăракан позицисем патне çитнĕ. Валонь, Ле Пью, Кувиль тата Ровиль-Ла-Биго хулисене ирĕке кăларнă. Тилли-Сюр-Сель районĕнче Германи çарĕсен виçĕ атакине сирсе янă. Ытти секторсенче пуринче те патрульсем активлăн кĕрешнĕ.

Енер кăнтăрлапа каçхине союзниксен авиацийĕ Па-де Кале районĕнче самолет-снарядсен базине атакăланă. Çурçĕр Францири аслă районра тăшманăн артиллери батарейисене, çарсем тиенĕ эшелонĕсене, паровозĕсене тата чугун çул сооруженийĕсене темиçе хутчен пыра-пыра çапнă».



Шербур хулишĕн çапăçни

ЛОНДОН, июнĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Америка радиокорреспонденчĕ паян, июнĕн 21-мĕшĕнче, кăнтăрла иртсен Нормандирен çапла пĕлтерчĕ: «Пирĕн çĕр çинчи çарсем Шербура пырса кĕреççĕ».

ЛОНДОН, июнĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Шербуртан тарнă французсем çапла каласа параççĕ: Германи влаçĕсем хуларан тухса каяççĕ. Юлашки хут хирĕç тăрса çапăçас умĕн нимĕçсем Шербур хулине ишеççĕ. Союзниксене портри сооруженисемпе усă курма май парас мар тесе, вĕсем çав сооруженисене виçĕ кун хушши ĕнтĕ сирпĕнтере-сирпĕнтере яраççĕ.

ФРАНЦИРЕ ФРАНЦУЗ ПАТРИОЧĔСЕМ НИМĔÇСЕМПЕ ТЫТĂÇНИ

АЛЖИР, июнĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта килнĕ хыпарсем тăрăх, юлашки кунсенче Кăнтăр Францири нумай департаментсенче французсен вăйĕсемпе нимĕç çарĕсем хушшинче хĕçпăшаллă тытăçусем пула-пула иртнĕ. Нимĕç оккупанчĕсене хирĕç темиçе вунă пин француз алла хĕçпăшал тытса кĕрешет. Гитлеровецсен хăйсен çарĕсене пулăшма çĕнĕ вăйсем нумай ямалла пулнă.

Веркор районĕнче, Дромпа Изер департаменчĕсенче нимĕçсем çапăçусенче йывăр артиллерипе усă кураççĕ. Апла пулин те, французсем вăйлă хирĕç тăраççĕ. Дордонь департаментĕнче партизансене хирĕç Испани фашисчĕсен «кăвак кĕпесем» ятлă дивизийĕн чаçĕсем те çапăçаççĕ.

ЖЕНЕВА, июнĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Германин оккупацилле влаçĕсем приказ кăларнă. Çав приказ тăрăх, партизансем кĕрешекен районсенче пĕтĕм власть нимĕçсен аллине куçать.

БРАЗЗАВИЛЬ, июнĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Браззавильти радио çапла пĕлтерет: француз партизанĕсем нимĕçсен çулйĕрĕсемпе çыхăнăвĕсене тата электричество линийĕсене активлăн пăсма тытăннă. Бордопа Лимож хушшинчи чугун çула темиçе тĕлте ишнĕ. Ажанпа Тулуза хушшинчи çĕр айĕнчи паха кабеле татнă.

США ВИЦЕ-ПРЕЗИДЕНЧĔ УОЛЛЕС ЧУНЦИНА ПЫНИ

ЛОНДОН, июнĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Пĕрлешӳллĕ Штатсен Вице-Президенчĕ Уоллес паян Чунцина пынă, унта ăна генералиссимус Чан Кай-ши хирĕç тухса кĕтсе илнĕ. Америкăн çар базисене пырса курсан тата Китайри культура, ялхуçалăх, кооператуци учрежденийĕсене пырса пăхсан, Уоллес çийĕнчех США-на таврăнма шутлать.

ФРАНЦУЗ ÇАРĔСЕМ ЭЛЬБА УТРАВНЕ ПĔТĔМĔШПЕХ ЙЫШĂННА

ЛОНДОН, июнĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Алжирти радио пĕлтернине сарать, француз çарĕсем Эльба утравне пĕтĕмĕшпех йышăннă, тенĕ çав пĕлтерӳре.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Чăвашсен музыкăпа театр училищи çак отделенисене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет: 1) оперăпа юрă отделенине, 2) дирижерпа хор отделенине, 3) халăх инструменчĕсем, икĕ ретлĕ хуткупăс, баян тата аккордион калама вĕрентекен отделение, 4) струналлă инструментсем (купăс, виолончель, контрабас) калама вĕрентекен отделение, 5) фортепиано калама вĕрентекен отделение, 6) йывăçран тата пăхăртан тунă духовой инструментсем (кларнет, флейта, гобой, фагот, волторн, труба, корнет, т. ыт. те) калама вĕрентекен отделение, 7) тетар (актерсемпе режиссерсем пулма вĕрентекен) отделенине.

Музыкăпа театр училищин 1-мĕш курсне 13 çултан пуçласа 25 çула çитнисене— туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнисене, музыкăпа театр енчен пултарулă çынсене илеççĕ.

Отечественнăй вăрçă инвалиჩĕсене, вĕсен ӳт-пĕвĕ музыкăпа театр ĕçне вĕренме чармасть пулсан, чи малтан илеççĕ.

Заявленисене июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа сентябрĕн 10-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Вĕренме кĕмелли испытанисем сентябрĕн 10-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче пулса иртеççĕ. Музыка училищине вĕренме кĕмешкĕн иквиçĕ юрă юрлама пĕлмелле, сасăсене итлесе лайăх уйăрса илме пĕлмелле, ритмика енчен кăлтăксăр пулмалла; театр училищине вĕренме кĕмешкĕн ик-виçĕ стихотворени, басньăсем (Крыловăн е ыттисен баснисене), калавсем, пьесăсемпе поэмăсен татăкĕсене каласа пама пĕлмелле.

Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: 1) миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство, 2) хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство, 3) врач панă справка. Паспортне кашни хăйпе пĕрле илсе пымалла.

Музыкăпа театр училищисен 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш тата 4-мĕш курсĕсенче вĕреннĕ студентсене, 1941 çулта вăрçă пуçланнă пирки вĕренме пăрахнăскерсене, çĕнĕрен вĕренме пыма чĕнеççĕ. Студент пулнисем пурте малалла вĕренес килнине тата мĕнле специальноçа вĕренме кĕнине кăтартса заявлени памалла.

Аслă классенче вĕренекен арçын студентсене вĕреннĕ вăхăтра çара илмеççĕ.

Студентсене пурне те рабочисемпе тан снабжени, выртса тăмалли вырăнсем тата общежити пăраççĕ, стипендисене мĕнле вĕреннине кура параççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Союзная, 3.

Канашри финанспа экономика техникумĕ пĕрремĕш курса вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Техникум финанс органĕсенче ĕçлеме бюджетпа налог инспекторĕсемпе бухгалтерĕсене хатĕрлет.

Техникумра виçĕ çул вĕренмелле.

Техникума 14 çултан пуçласа 25 çула çитнĕ çынсене, вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекенсене илеççĕ.

Заявленисене июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа августăн 20-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Вĕренме кĕмелли экзаменсем августăн 21-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче çак предметсемпе пулса иртеççĕ: вырăс чĕлхипе, литературăпа, математикăпа тата Конституципе.

Отличниксене экзаменсĕрех илеççĕ.

Вĕренекенсене уйăхне 80 тенкĕрен пуçласа 150 тенке çитиччен стипенди параççĕ. Ытти çĕртен килнисене общежитие е хваттере вырнаçтараççĕ.

Вĕренекенсене çакăрпа ытти продуктсем иккĕмĕш категорири рабочисен нормипе параççĕ. Столовăй пур.

Адрес: г. Канаш, Комсомольская, 9.

Чăваш АССР Наркомлесĕн «Чăвашлесдрев» тресте çакăн пек работниксем кирлĕ: йывăç çурас тата каскалас ĕçе пĕлекен инженерсемпе техниксем, главнăй механик, технормировани инженерĕ, главнăй бухгалтер, товаровед, шофер, конюх тата конторăра ĕçлекен работниксем. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Урицкого, 36, Чувашлесдрев.

Маслопром тресте инженер-строитель, техник-строитель, плановик, финанс ревизорĕсем тата машинистка кирлĕ. Ĕçукçи — калаçса таталнă тăрăх. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Герцена Вторая, дом 32. Телефон 2—63.

Шупашкарти эрех комбинатне уполномоченнăйсем тата районсенче сад çимĕçĕсемпе çырласем хатĕрлекен агентсем кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Коммунальная Слобода, 21. Телефон 1—73 один звонок.

6—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —3—23.

НТ.00209 Типографи №1, Управлениă полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.